27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮЛЬ 8 ШАМАТКУН 134(6629) №

Чăваш Коммуни

¡Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Политпросвет учрежденийĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн халăхăн политикăллă ăнланăвĕпе активлăхĕ вăйлăн ÿсрĕç. Ĕçсынисем вăрçă фрончĕсенче, хамăрăн Тăван çĕршывра тата пĕтĕм тĕнчере пулса иртекен пур ĕçсемпе те интересленеççĕ.

Тылри патриотсен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне татах та ытларах ÿстерес тесен, партипе совет организацийĕсен, комсомолăн ĕçсынисем хушшинчи политикăллă агитаци ĕçне тĕпренех вăйлатмалла. Колхозник çĕнĕ хыпарсем пĕлме, партипе правительствăн постановленийĕсемпе паллашма ялта, чи малтан, радио е хаçат пур çĕре пырать. Çĕнĕ хыпарсемпе паллашнă хыççăн унăн çĕнĕ шухăшсем çуралаççĕ. Çав шухăшсем пирки канашлама вăл хăйĕнчен ытларах пĕлекен çын патне каять. Кун пек çын ялта, пуринчен малтан, вулав çурчĕн пуçлăхĕ, учитель е агроном пулса тăрать. Хăйĕн чĕрпинчи шухăшсене ĕмĕтсем пирки каласан, колхозникĕн ĕçлес, фронта çĕршыва пулăшас кăмăлĕ ытларах çĕкленет.

Вăрçă кунĕсенче политикăллă сутĕçĕн пĕлтерĕшĕ, политпросвет учрежденийĕсен вырăнĕ нихçанхи пек мар ÿсрĕ. Пирĕн партипе правительство çав ĕçе пысăка хурса хаклаççĕ. Пирĕн Чăваш республикинчи ялсемпе хуласенче государство 621 вулав çурчĕ, район центрĕсенче 28 культура çурчĕ, 28 библиотека, ялсенче 61 библиотека, хуласенче 5 библиотека уçса панă. Кунсăр пуçне республика столицинче — центральнăй библиотека, краеведени музейĕ пур.

Хуласемпе ялсенче хаçат-журналсем, радио, кино анлăн сарăлнă. Республикăри хаçатсем нумай пинлĕ тиражпа тухса тăраççĕ. Çавăн пекех кашни районăн хăйĕн хаçачĕ пур.

Çапла ĕнтĕ халăх хушшинче политикăллă агитаци ĕçне, культурăллă-массăллă ĕçе туса пыма партипе правительство пире анлă майсем панă. Пирĕн çав майсемпе усă курса пĕлмелле.

Политикăллă сутĕç халĕхи вăхăтра мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илнĕ политпросвет работникĕсем хăйсен ĕçне кăтартуллăн организацилеççĕ, вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене, рабочисемпе работницăсене фронта çĕршывшăн вăя хĕрхенмесĕр ĕçлеме мобилизацилеççĕ. Вĕсем пирĕн аслă çулпуçăн Сталин юлташăн отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче каланă сăмахĕсемпе приказĕсене, партипе правительствăн постановленийĕсене хăйсен ĕçĕн тĕп никĕсне хывнă.

Политикăллă сутĕçне организацилес енĕпе республикăри районсем хушшинче Елчĕк районĕ лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Районра пĕтĕмпе 25 вулав çурчĕ, ялсенче икĕ библиотека, район центрĕнче пĕр библиотекăпа тата социализмлă культура çурчĕ, колхозсенче 13 клуб ĕçлеççĕ. Вĕсене пурне те лайăх кадрсем тупса панă. Вулав çурчĕсем хăйсем тавра пысăк актив — 393 çын таран пĕтĕçтерсе тăраççĕ. Кашни вулав çуртĕнчех колхозниксене тĕрлĕ ыйтусемпе справкăсем паракан сĕтелсем тунă. Елчĕк районĕнчи политпросвет работникĕсем районри партипе совет органĕсене, колхозсене политикăпа хуçалăх задачисене пурнăçа кĕртме лайăх пулăшаççĕ.

Ку районри вулав çурчĕсенчен уйрăмах Сăрьел ялсоветĕнчи вулав çуртне палăртмалла. Ăна парти членĕ, Отечественнăй вăрçă инвалилĕ З. С. Сабирзянов юлташ ертсе пырать. Вулав çуртне пултаран та, шалтан та лайăх илемлетнĕ, унта сĕтелсем, тĕрлĕ музыка инструменчĕсем, вăйă хатĕрĕсем çителĕклĕ. Вулав çуртĕнче «Отечественнăй вăрçă геройĕсем», «Фронтпа тыла», «Совет хĕрарăмĕ отечественнăй вăрçăра» ятлă выставкăсем туса йĕркеленĕ. Çав выставкăсенче хăйсен ялĕнчи колхозĕнчи ĕçсене тĕплĕн кăтартса панă. Вулав çурчĕн пуян библиотека, хаçат-журналсем пур, унтах хаçат витрини тата паха ĕç тĕслĕхĕсене кăтартса паракан хăма тунă. Ялти активран 17 çынна вулав çурчĕн советне суйланă, совет членĕсене бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Актив колхозниксем хушшинче докладсемпе калаçусем ирттерет. Колхозра, çавăн пекех бригадăсенче те тăтăшах стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ. Колхозниксем хушшинчи политикăллă ĕçе лайăх йĕркелесине пула, ку ялсоветĕнчи «Марс» колхоз пур ĕçре те малта пырать.

Политикăллă сутĕç юлашки вăхăтра ытти хăшпĕр районсенче те лайăхланипе курма пулать. Кăçалхи мартăн 8-мĕшĕнче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, Красноармейски районри политпросвет учрежденийĕсем мĕнле ĕçленине пăхса тухса, унта пысăк ситменлĕхсем пуррине палăртнăччĕ. ВКП(б) Красноармейски райкомĕ çавăн хыççăн политпросвет учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Çавăн пекех ку ĕç Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче те вăйланнине палăртмалла. Куславккапа Çĕрпÿ район центрĕсенчи клубсем, Чкаловскинчи культура çурчĕ, Вăрмар районĕнчи Кольповка колхозĕн клубĕ ĕçре аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Политикăллă сутĕç ыйтăвĕсемпе çак кунсенче пулса иртнĕ республикăри канашлу политпросвет учрежденийĕсен ĕçĕнче питех те пысăк ситменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Республикăри 621 вулав çуртĕнчен 591 вулав çуртĕнче кăна избачсем пур. Чылай чухне вулав çурчĕсен пуçлăхĕсене суйласа илес ĕç çине парти райкомĕсемпе районри сутĕç пайĕсем çиелтен пăхаççĕ. Çавна пула вара вулав çурчĕсене хăйсен ĕçне юратман çынсем лекеççĕ. Вулав çурчĕсен пуçлăхĕсене комсомол райкомĕсем, сутĕç пайĕсем начар пулăшса пыраççĕ.

Çĕрпÿ, Первомайски, Канаш районĕсенчи чылай вулав çурчĕсем ĕçлемесĕр лараççĕ. Республикăри пĕтĕм вулав çурчĕсенчен 50 процентне хăйсене уйрăм çуртсем тупса паман. Вулав çурчĕсене час-часах çĕрулми е тĕштырă вăрлăхĕ ярсвизацилеме йышăнаççĕ. Колхозсенчи, район центрĕсенчи библиотекăсем кĕнеке тĕлĕшĕнчен чухăн, вĕсене пуянлатса пырас енĕпе никам та çине тăрса ĕçлемест. Кивĕ кĕнекесем илессине йĕркелемен, хăшпĕр çĕрте пуррисене те салатса пĕтереççĕ. Мускавран, Шупашкартан илекен кĕнекесене тĕрĕс валеçес ыйтупа интересленекенсем сахал. Нумай чухне кĕнекесемпе хаçатсем район центрĕсенчех вырнаçса пĕтеççĕ. Сăмахран, Сĕнтĕрвăрри районĕнче «Правда» хаçатăн 35 экземплярĕнчен — 27-шне, «Известия» хаçатăн 27 экземплярĕнчен — 16-шне районри учрежденисенчех вырнаçтарса тухнă.

Хăшпĕр районсенче политпросвет учрежденийĕсем валли панă укса-тенке кирлĕ çĕре расходламаççĕ. Октябрьски районра иртнĕ çул çав ĕç валли панă 35 пин тенкĕрен 15.500 тенкине кăна политикăллă сутĕç валли расходланă. Нумай ялсоветĕсем вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсене вутă, электрин тупса памаççĕ, е панă вутта та урăх çĕре расходлаççĕ.

Парти райкомĕсемпе комсомол райкомĕсен, районсенчи сутĕç органĕсен политикăллă сутĕç çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхмалла, политпросвет учрежденийĕсенчи ситменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтермелле, вĕсен ĕçĕн политикăллă содержанине кулленех контроллесе тăмалла, вулав çурчĕсемпе клубсен, библиотекăсен кулленхи ĕçне анлă актива—комсомолецсене, учительсене, агрономсене, ялти пĕтĕм интеллигенцие явăстармалла.

Ялсенчи вулав çурчĕсемпе колхозсен клубĕсене чăн-чăн культура вучахĕсем туса хурса, пĕтĕм политикăллă-массăллă ĕçе çĕнĕ пусăма çĕклесе, ĕçсынисене вăйлă тырпулшăн, йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешме, çапла вара тăван çĕршыва фронта татах та вăйлăрах пулăшма мобилизацилер.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Çак кунсенче, пĕр шухăшпа хавхаланнă пĕтĕм совет халăхĕ хăйĕн перекетлесе хăварнă укçи-тенкине Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тунă çĕре панă вăхăтра, пирĕн упăшкасемпе ывăлсем, алла хĕçпăшал тытса хамăрăн Тăван çĕршыва хÿтĕлесе, тăшман йыткĕтĕвĕсене совет çĕрĕ çинчен хăвалана вăхăтра, эпĕ, фронтовик арăмĕ, пилĕк ача амăшĕ, çапăçу техники тумашкăн хамăн перекетлесе хăварнă укçаран 12.000 тенкĕ паратăп.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа эпĕ Хĕрлĕ Çар фондне 23 пăт тырă хыврăм, Государствăн Виççĕмĕш Военнăй заемне 3.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине пĕтĕмпех тÿлесе татрăм.

«Красное Сормово» колхозра эпĕ 1930 çултанпа пăру пăхса пурăнатăп. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерпĕшĕн, çамрăк выльăхсене сыхласа хăварнăшăн Совет Союзĕн Тĕпĕçтăвкомĕ 1936 çулта мана «Знак Почета» орденпа наградăларĕ.

Тăватă çул хушшинче эпĕ 150 пăру пăхса ÿстертĕм, пурне те тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа хăвартăм. Çакăншăн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ мана 1944 çулхи апрель уйăхĕнче Хисеплĕ грамота парса наградăларĕ.

Эпĕ Сире çапла шантарса калатăп: эпĕ тылра малашне те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, фронта пулăшса тăрăп.

Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, пирĕн Тăван çĕршывăн чапĕшĕн, тăшмансене хăратса тăмашкăн нумай çулсем хушши пурăнма вăйпа сывлăх сунатăп.

Чăваш АССР-ĕнчи Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн пăру пăхаканĕ Н. Г. ГРИГОРЬЕВА.

1944 çулхи июлĕн 4-мĕшĕ.

Чăваш АССР-ĕ, Муркаш, Муркаш районĕнчи „Красное Сормово" колхозăн пăру пăхаканне Н. Г. ГРИГОРЬЕВĂНА

Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнăшăн Сире, Ксения Григорьевна, салам калатăп тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăватăп.

И. СТАЛИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 6-мĕшĕнче ПЕТРОЗАВОДСК хулинчен хĕвеланăçнерехре КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн вăрман çулĕсемпе кÿлĕсем хушшинчи инженерла чăрмавĕсене сире-сире ярса, çапла наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, çав шутра — ОНГА-МУКСА, КАМЕНТ-НАВОЛОК, ВОХТОЗЕРО, ЛАХТА, ИСАКАЛА, ПАЛОЯРВИ, КИРККОЙОКИ, БРЯУССУ ятлă ялсем.

ПОЛОЦК хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра — БОЛЬШАЯ ЩЕПЕРНЯ, ЗАЕНКИ, ГЛИСНОВКА, ВЛАДЫЧИНО, ЗВАНОЕ, БОРОВУХА КЕВЛЫ, СЛОБОЩУКИ, КОЧЕРЕЖИНО, ЗАБОРЬЕ, ЯКУБИНКИ, КОНЦЕВАЯ ятлă ялсем тата ТОЛМАЧЕВСКАЯ, СУХОЙ БОР, БУЛАВСКИЙ, БОРОВУХА, АДАМОВО ятлă чугун çул станцийĕсем.

МИНСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени туса пырса, Вилейка облаçĕнчи район центрне СВИРЬ ялне, Барановичи облаçĕнчи район центрĕсене ВОЛОЖИН хулипе ИВАНЕЦ хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 300 пункта ытла йышăннă, çав шутра — БОЛЬШИЕ СТОЛПЕНЕТЫ, ЗНАХАРИ, МИХАЛИШКИ, НЕСТАНИШКИ, ГЕРВЯТЫ, АНДРЕЕВЦЫ, ЖОДИШКИ, ВОЛЕЙКОВИЧИ, СОЛЫ, БИЛЕВИЧИ, МИХНЕВИЧИ, ВЕНИЦА, МАРКОВО, ЛЕБЕДЗЕВ, ЛОСК, ГОРОДЗЬКИ, ДОРЫ, БОРОВИКОВЩИЗНА ятлă ялсем тата ЗАЛЕСЬЕ, ПРУДЫ, ПОЛОЧАНЫ, ГОРОДЗЬКИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

МИНСК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, Минск облаçĕнчи район центрне ДЗЕРЖИНСК хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ПУТЧИНО, ВАЛОВНИКИ, БОРОВАЯ, РУДИЦА, ВИШНЕВКА, ПОЛОНЕВИЧИ, ЧУРИЛЫ, МЕЛЬКОВИЧИ ятлă пысăк ялсем тата КОЙДАНОВО, НЕГОРЕЛОЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

МИНСК хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн ăнăçлăн çапăçнă. Çапăçусенче пирĕн çарсем 5.000 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен 78-мĕш штурмовой дивизийĕнчи 195-мĕш полкĕ хăйĕн пĕтĕм йышĕпех тата полк командирĕпе Ольденбер полковникпа пĕрлех тыткăна парăннă.

БАРАНОВИЧИ енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çаплах наступлени туса пынă, Барановичи облаçĕнчи район центрне ЛЯХОВИЧИ хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта йышăннă, çав шутра — ИШКОЛДЗЬ, ПЕТКЕВИЧИ, СНУВ, ПОДЛЕСЕЙКИ, МЫСЛОБОЕ, РУСИНОВИЧИ ятлă ялсем тата РЕЙТАНОВ ятлă чугун çул станцийĕ.

ПРИПЯТЬ шывĕн вăтам тăрăхĕнчи районра, МОЗЫРЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем Полесье облаçĕнчи район центрне ЖИТКОВИЧИ хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем июлĕн 6-мĕшĕнче нимĕçсен пысăк опорнăй пунктне тата пысăк чугун çул узелне—КОВЕЛЬ хулине тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 27 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 22 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БЕЛОСТОК ТАТА ВИЛЬНО ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Июлĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци нимĕçсен Белостокпа Вильно чугун çул узелĕсенчи çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула, Белосток чугун çул узелĕнче пушарсем нумай тухнă. Тăшманăн çар хатĕрĕсем тиенĕ вагонĕсемпе платформисем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Вильно чугун çул узелне пирĕн авиаци тапăннă вăхăтра унта нимĕçсен 15 эшелон таран тăнă. Бомбăсем тÿрех лекнипе темиçе эшелон çĕмĕрĕлнĕ. Боеприпассем тиенĕ пысăк эшелон сирпĕнсе кайнă. Бомбăсем пăрахнине пула тата боеприпассем сирпĕнсе кайнине пула, пушарсем тухнă, вĕсем, сарăлса пырса, чугун çул узелĕн пĕтĕм территорине ярса илнĕ.

☆ ☆ ☆

Полоцк хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине сирсе ярса, çаплах наступлени туса пынă. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне нимĕçсем кĕперсене сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ, çулсене пăсаççĕ, минăсем хурса хăвараççĕ тата çулсене тĕрлĕ япаласем пăрахса пÿлеççĕ. Пĕр соединени чаçĕсем, çапăçса малалла куçса пырса, нимĕç пехотине пĕр полка çити çапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Боеприпассен тата çар пурлăхĕн темиçе складне тытса илнĕ.

* * *

Минск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман пирĕн çарсене наступлени тума чарма тем пекех тăрăшать. Нимĕçсем хурал батальонĕсемпе строительство батальонĕсене, хуçалăх подразделенийĕсене тата тылри ытти чаçсене илсе пырса, çийĕнчех çапăçăва кĕртсе яраççĕ. Пирĕн чаçсем нимĕçсен 391-мĕш хурал дивизин батальонне Свирь ялне кĕссе хартнă та аркатса тăкнă. Батальонăн пĕтĕм хĕçпăшалне тытса илнĕ тата 200 çынна тыткăна илнĕ. Сморгонь хулинчен хĕвеланăçнерехре çав дивизин тепĕр батальонне пĕтерсе тăкнă. Çав батальонри 350 салтакпа офицер, хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахса, тыткăна парăннă. Наступление вăйлатса пырса, пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсен Вилья тата Ошмянка шывĕсем хĕрринчи хупăри оборона рубежне татнă та, çав шывсем урлă каçса кайса, Михалишки, Гервяты тата Солы ятлă опорнăй пунктсене тытса илнĕ. Минск хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ахаль çулсен паха узелĕсене —Воложин хулипе Ивенец хулине — çапăçса тытса илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, çав участокра нимĕçсен 1.200 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, 7 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен 4 туппине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 3 танк, 18 хир туппи, 11 миномет, 76 пулемет тата çар хатĕрĕсем тиенĕ автомашинăсемпе лавсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Минск хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассăн çапăçнă. Нимĕçсем хĕвеланăç еннелле татса тухма калама çук вăйлă тăрăшаççĕ, анчах вĕсене шур çĕрте те артиллерипе пулеметсенчен хăватлăн персе хирĕç тăраççĕ. Çапăçусем пыракан район гитлеровецсен виллисемпе витĕннĕ. Нимĕçсен икĕ отрячĕ, пĕр 1.500 çынна яхăн, тĕп группировкăран уйăрăлнă та «хурантан» хăйсем тĕллĕн татса тухма хăтланса пăхнă. Икĕ отрядне те вара пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкнă. 11 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 7 тупă тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Нимĕçсен уйрăм чаçĕсем, ăнăçсăр атакăланă хыççăн, тыткăна парăнаççĕ.

* * *

Барановичи енче пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн пилĕк хаяр контратакине сирсе янă. Малалла куçса пырса, пирĕн çарсем нимĕçсене Ляховичи хулинчен сирпĕтсе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра совет кавалеристĕсем нимĕçсен 200 çынтан тăракан ушкăнне пĕтерсе тăкнă та тĕрлĕ калибрлă 25 тупă тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă пехотине штурмланă тата тăшманăн çулйĕрĕсене пыра-пыра çапнă. Çарсемпе çар хатĕрĕсем тиенĕ 80 автомашина ытла, 3 бензоцистерна пĕтерсе тăкнă, 30 вагон тата 4 паровоз çĕмĕрнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн торпеда катерĕсен ушкăнĕ тăшман карапĕсен отрядне атакăланă. Торпедăсем тÿрех пырса тивнипе пĕр транспорт, канонерка лодки тата хăвăрт çÿрекен десант баржи шыва путнă. Пирĕн катерсем хăйсен базисене пĕр сухатусăрах тата пĕр сиенсĕрех таврăннă.

Флот авиацийĕ Выборг заливĕнче тăшман суднисене пырса çапнă. Икĕ транспорта, хуралта çÿрекен пĕр катера, хăвăрт çÿрекен 2 десант баржине тата тиенĕ грузсем турттаракан 2 баржăна шыва путарнă. Сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсемпе финсен 10 самолетне персе ÿкернĕ.

Кривой Рог бассейнĕнчи шахтăсене юсаса хута яни

Кривой Рог руда бассейнĕнче шахтăсене юсаса хута ярас ĕç кунсеренех сарăлса пырать. 11 шахта ĕçлеме тытăннă ĕнтĕ. Вĕсем июнь уйăхĕнче темиçе вунă пин тонна тимĕр руди туса панă, уйăхри программăна ытлашшипех тултарнă.

Ултă шахтăран халь шыв кăлараççĕ, çавăн хыççăн унта те ĕçĕсем пуçланмалла.

Рабочисем шахтăсене кĕске вăхăтрах хута яма пĕтĕм вăйпа тăрăшаççĕ. Нешкаш тата Шупик бурщиксем пĕр смена хушшинче темиçе норма тултарса пыраççĕ. Вĕсем нумаях пулмасть заданине 1.400 процент тултарнă. Инструментсем çитмен пулсан та вĕсем çавăн пек тухăçлă ĕçленĕ.

«Коммунист» заводра нимĕçсем хуçалаппин йĕрĕсене ăнăçлăн пĕтерсе пыраççĕ. Унта чугун шăратакан цеха хута янă, çак кунсенче тата хурçă шăратакан цех ĕçлеме тытăнмалла. (ТАСС)

Ÿкерчĕк çинче: Шăхасан МТС-ĕнче юсаса пĕтернĕ комбайна государство комиссийĕ йышăнать.

С. ФРИД фотоÿкерчĕкĕ.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Калинино районĕ çĕртме туса пĕтернĕ

КАЛИНИНО, июлĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсем çуракине вĕçленĕ хыççăнах ирхи çĕртме тума тытăнчĕç. Ирхи çĕртме планне ăнăçлă тултарчĕç. Паянхи кун тĕлне таса çĕртме 4945 гектар сухаласа, государство планне пĕтĕмпех тултарчĕç. Халĕ çĕртме пуссине акнă курăксене çулса пухаççĕ, çийĕнчех сухаласа пыраççĕ.

Районра халĕ выльăхсене валли апат хатĕрлес ĕç ăнăçлă пырать. 2000 тоннăна яхăн силос хывнă, витаминлă утă 1542 центнер хатĕрленĕ, 497 центнер вĕлтрен, 489 центнер арăмути пухса типĕтнĕ. Колхозсенче выльăхсене тĕрлĕ чиртен сыватмалли курăксене пухас ĕç те ăнăçлă пырать. Пурĕ 442 килограмм тĕрлĕ курăксем пухнă. Вĕсене выльăх тухтăрĕсем кăтартнă тăрăх типĕтеççĕ те хĕлле валли хатĕрлесе хураççĕ.

Халĕ кашни колхозрах утă çулас ĕç хĕрÿллĕ пырать. Çак кунсенчех район утă çулас ĕçе те вĕçлет.

„Ĕлкĕрĕпĕр-ха, тырă вырма халех тухас çук"

Йĕпреç районĕнчи колхозсем кăçал 5.226 гектар çĕртме тумалла, çак вăхăта çитсе 2.657 гектара яхăн сухаланă. Районра малта пыракан «Большевик», «Красный партизан», «Тымар» тата ытти хăшпĕр колхозсем çĕртме сухине паян-ыран пĕтереççĕ.

Анчах та уйрăм колхозсенче çĕртме тăвас ĕç ытла та çителĕксĕр пырать. Уйрăмăнах «Мартăн 8-мĕшĕ», «Коммунар», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче çак ĕç чăтма çук начар пырать. «Мартăн 8-мĕшĕ» колхоз 250 гектар çĕртме тумалла, кунта пурĕ те 20 гектар çеç сухаланă, Киров ячĕпе тăракан колхоз 50 гектар вырăнне 9 гектар çеç тунă. Çумăрлă кунсем пуçланиччен кунта: çĕр хытă, çумăрчен сухаланин усси çук, тесе тăратчĕç, халĕ ĕнтĕ вăйлă çумăрсем пулса иртнĕ пулсан та: «ĕлкĕрĕпĕр-ха, тырă вырма халех тухас çук,»—тесе лараççĕ. Райçĕрĕç пайĕн руководителĕсем те çак шухăшпа килĕшеççĕ, пулас.

П. КУРАНОВ.

Силос хывма халех тытăнас пулать

Сĕнтĕр районĕнчи Кăпас ялсоветĕнчи колхозсем иртнĕ çул малта пыраканнисен шутĕнче пулнă. Анчах та иртнĕ çулхи çитĕнÿсемпе лăпланса, кăçал кунта ĕçе чылай япăхлатрĕç. Ялсоветне виçĕ колхоз кĕрет. Паянхи кун тĕлне вĕсенчен пĕри те силос хывма тытăнман. Выльăхсене валли апат хатĕрлес енĕпе ытла те начар ĕçлеççĕ. «Ким» колхоз 225 тонна, «Заря» колхоз 220 тонна силос хывмалла, анчах вĕсем пĕр тонна та хывман, шăтăкĕсене те хатĕрлеме тытăнман.

Выльăхсене валли апат çителĕклĕ хатĕрлеменни иртнĕ хĕлле хăшпĕр колхозсене пысăк сиен кÿчĕ. Сăмахран, «Ким» колхозра 10 ĕне, 68 сурăх вилчĕç. Çакă ĕнтĕ выльăх апатне хатĕрлев пирки пикенерех ĕçлеме хушать. Силос валли курăксем ял хушшинчех нумай ÿсеççĕ, вĕсене пухса силос хывмалли плана ытлашшипех тултарма пулать, тăрăшни çеç кирлĕ.

Н. С.

Сдельщинăпа ĕçлесе

МУРКАШ. Атапай ялсоветĕнчи «Крестьянин» колхоз членĕсем утă çулас ĕçе ăнăçлăн туса пыраççĕ. Кунта кашни колхозник уйрăм участок çинче çулать. Утă çулакансенчен нормăна тултарманни пĕрре те çук. Уйрăмăнах Садовников юлташ ертсе пыракан 2-мĕш бригада кăтартуллăн ĕçлет. Ку бригадăри В. Воробьев, А. Белоусов, А. Воробьева, П. Кулькова юлташсем кунсерен 0,40-шер гектар çулас вырăнне 0,60—0,68-шер гектар çулаççĕ. Халĕ колхоз пĕтĕмпе 19 гектар ытла çулнă.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Республикăри колхозсем июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне çĕртме тумалли, пахча-çимĕçсене çумламалли, утă çулса пухмалли тата силос хывмалли плансене мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан

СВОДКА (процентпа)

Районсем	Çĕртме тунă	Пахча-çимĕçсене çумланă	Улăхри утта çулнă	Силос хывнă
Улатăр	24,2	91,3	46,3	34,2
Элĕк	91,3	100,0	34,2	30,7
Вăркар	101,0	96,0	23,0	37,2
Йĕпреç	68,0	—	104,5	22,0
Ишлей	94,6	78,9	38,7	51,0
Калинино	99,2	97,2	74,8	55,0
Канаш	96,4	70,3	74,1	27,9
Куславкка	87,5	44,6	10,4	36,8
Комсомольски	67,3	81,5	98,4	55,5
Красноармейски	100,0	—	34,7	48,5
Хĕрлĕ Чутай	70,2	73,2	75,9	14,1
Кувакино	3,1	6,5	44,6	43,6
Сĕнтĕрвăрри	94,7	72,1	9,5	98,0
Муркаш	84,2	100,0	48,5	60,2
Октябрьски	88,6	—	32,7	61,9
Первомайски	57,6	62,7	73,5	10,1
Пăрачкав	35,5	100,0	64,3	42,7
Советски	100,3	—	41,1	21,9
Сĕнтĕр	102,7	52,9	31,2	70,4
Вăрмар	83,3	100,0	146,1	26,2
Çĕрпÿ	108,3	98,4	40,3	46,5
Шупашкар	98,1	100,0	32,7	48,6
Чкаловски	35,4	—	100,0	58,4
Чурачăк	92,7	71,4	11,0	73,1
Шăмăршă	35,8	79,4	63,6	23,5
Шăхасан	100,0	100,0	56,0	25,1
Çĕмĕрле	53,9	—	65,6	75,9
Етĕрне	80,7	100,0	49,2	51,5
Елчĕк	95,9	100,0	101,0	52,8
Тăвай	62,2	100,0	128,4	34,8
Шупашкар хули	96,3	74,2	—	—

Кунĕн-çĕрĕн утă çулаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, июлĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Уяр кунсем пуçланчĕç. Колхозсем халĕ кашни секетпе туллин усă курса, кунĕн-çĕрĕн утă çулаççĕ. «Красная Армия» колхоз (председателĕ Анкудинов юлташ) 12 гектар çинчи клевера çулса пухнă, «Сĕнтĕрпуç» колхоз 25 гектар çинчи утта çулса капана хывнă. Сталин ячĕпе тăракан колхозра 30 гектар, «Красная звезда» колхозра 10 гектар улăх утине çулса пухнă.

Ĕнер районри 12 колхоз утă çулма тухрĕç. «Трактор», Урицкий тата Чкалов ячĕсемпе тăракан колхозсенче лапаткăсем çитмеççĕ. Çав вăхăтра Сĕнтĕрвăрринче лапаткăсем сутăнмасăр выртаççĕ. Райсоюзăн çаврăнăçусăр руководителĕсем лапаткăсемпе çавасене ялпо магазинĕсене вăхăтра çитерес тесе тăрăшмаççĕ.

Ф. ИЛЬИН.

Выльăхсене чуптарас ĕç начар пырать

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре вĕсене чуптарса хăварни пысăк вырăн йышăнать. Анчах та Сĕнтĕр районĕнчи Кăпасри «Заря» колхозра çак ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Колхозра 27 кĕсре, вĕсенчен 14 кĕсрине кăна чуптарнă, 20 ĕнерен пурĕ те 2 ĕнине кăна чуптарнă.

«КИМ» колхозра та çак ĕçе хакламаççĕ. Кунта 30 кĕсререн 8-шне çеç чуптарнă. Колхозра 5 ăйăр пур, анчах та вĕсене йĕркеллĕ пăхмаççĕ. Колхоз председателĕ Патов юлташ «Летчик» ятлă ăйăрпа Шупашкара эрех патне кайнă та, унта икĕ кун ытла çÿресе, ăйăра йăлтах халтан янă. Кун пек тĕслĕхсем татах та илсе кăтартма пулать

Н. СКВОРЦОВ, Юваново участокĕнчи выльăх фельдшерĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партие илес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес пулать

ПĔРЕС. Районти парторганизацисем кăçал парти ретне 56 çынна илнĕ. [illegible] ВКП(б) членне 2 çынна, ВКП(б) членне кандидатне 9 çынна илнĕ. [illegible]

[illegible]

П. КУРАКОВ.

Комсомол райкомĕ пуçламĕш организацисене пулăшмасть

КАЛИНИНО. Комсомолăн Тури Карачура «Ленин» ячĕллĕ колхозри пуçламĕш организацийĕн секретарĕ А. Комарова [illegible]

[illegible]

Б. ШОРНИКОВ.

Литература музейне çĕнĕрен уçмалла

1940-мĕш çулхи кĕркунне, чăваш литературин классикĕ Константин Иванов [illegible] Чăвашсен Наукăпа Тĕпчев институчĕ [illegible]

[illegible]

Тепĕр енчен, музейра халь çĕнĕ материалсене нумай пухса хумалла. Отечест- [illegible] культурăллă ĕçе çине тăрсах, вăраха ямасăр тăвас пулать.

Леонид АГАКОВ.
Аркадий ЭСХЕЛЬ.



Сталинградри Ленин орденĕпе Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ трактор заводĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Хурçă шăратакан цехра электричество кăмакисенчен хурçă юхтарса салатаççĕ.

Н. СИТНИКОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Чугун çул валли вутă хатĕрлесси— оборонăллă пысăк ĕç

МУРКАШ, июлĕн 7-мĕшĕ. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Район чугун çул валли вутă хатĕрлес ĕçре юлса пырать. Июнĕн 28-мĕшĕ тĕлне çур çулти плана хатĕрлес енĕпе 33 процент, турттарас енĕпе 40 процент çеç тултарнă. Юлса пынин тĕп сăлтавĕ — вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ вăхăтра тата çителĕклĕ парса тăманни. Мĕнрен килет-ха ку? Çĕмĕрле вăрман пунктĕнче ĕçлеме çынсемпе лашасем май уйăхĕнчех ямалла пулнă. Анчах хăшпĕр колхозсем май уйăхĕ вĕçленсен çеç 1—2-шер çын янă. Июнь уйăхĕнче те ĕç вăйне мобилизацилесси сӳрĕккĕн пычĕ. Вăрманта çуран 203 çын, лашапа 156 çын ĕçлес вырăнне, лашапа 35 çын, çуран 57 çын çеç ĕçленĕ. Вĕсем те кулленхи нормăна тултарса пыман. Çуран ĕçлекенсем июнь уйăхĕнче мĕн пурĕ 1.308 кубометр хатĕрленĕ, е кашни çын кулленхи 00,76 кубометр хатĕрлесе нормăна 38 процент çеç тултарнă.

Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмăнах Ендимĕркасси, Ярапайкасси, Ямайкасси тата Шурча ялсовечĕсем начар ĕçлеççĕ. Шурча ялсоветĕнчи 4 колхозран иккĕшĕ вăрман хатĕрлевĕнче пачах та ĕçлемен. Мĕншĕн тесен «Çĕнĕ Шурча» тата «Танк» колхозсенчен кайнă çынсем ĕçлеме тивĕçлĕ вăрман пунктĕнче мар, Хĕрлĕ Чутай вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ. Çак колхозăн председателĕсем П. Сальниковпа Ф. Васильев юлташсем хăйсен колхозникĕсем ăçта ĕçленипе те интересленмеççĕ, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмаççĕ. Вăрман ĕçĕнче ĕçлекенсем пĕррехинче киле таврăннă пулнă, колхоз председателĕсем вĕсемпе курса калаçман та. Çапла вара вĕсем татах хăйсене кайма памарнă вырăна мар, Хĕрлĕ Чутай вăрман хуçалăхнех кайнă. Шурча ялсовет председателĕ И. Григорьев юлташ çавăн çинчен «пĕлмесĕрех» юлнă.

Хăшпĕр колхоз председателĕсем вăрман хатĕрлес ĕç çине ответсăр пăхаççĕ, ĕçрен пăрăнакан çынсемпе килĕшсе параççĕ. Кашмаш ялсоветĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз вăрмана пĕр уйăхлăха ĕçлеме каякан çынсене пĕрер пăт çăнăх парса янă. Вĕсем ăна çиснă та 10 кунранах каялла таврăннă. Колхоз председателĕ Петров юлташ вĕсене ответ тыттарас вырăнне татах тепĕрер пăт çăнăх парса янă. Вара вĕсем вăрманта пĕр кун çурă пурăннă та лаша чирлĕ тесе каялла таврăннă. Йăваш чунлă Петров дезертирсене халĕ те ответ тыттарма шутламасть.

Чугун çул валли вутă хатĕрлесси — оборонăллă пысăк ĕç. Çак тĕлĕшпе юлса пынине çĕрпшывпа фронт умĕнче айăпа кĕни пулать. Çакна ăнланма вăхăт ĕнтĕ.

Т. ИВАНОВ.

Нефедова юлташ—заводри чи лайăх мастер

Челюков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра мастерсен ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура мастер Нефедова юлташ мала тухнă. Унăн смени уйăхри плана 170 процент тултарнă. Сменăра хăрушсăрлăх техникин йĕркине, ĕç дисциплинине пăсни тата брак туни пачах та пулман.

Завод дирекцийĕ Нефедова юлташа «Заводри чи лайăх мастер» ятне панă, уйăхри ĕçукçи тата костюмлăх пусма тавар парса премиленĕ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Малта пыракан предприяти рабочисен культурăпа йăла нушисене тивĕçтерме тăрăшни

Владимир Ильич ячĕпе тăракан завод социализмлă ăмăртура ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата пĕрремĕш премисене 19 хут хăйĕн аллине илнĕ ĕнтĕ.

Çав премисене вăл завод коллективĕн культурăпа йăла нушисене тивĕçтерес ĕçе ярать.

Июлĕн 1-мĕшĕнче Мускав патĕнче, питĕ илемлĕ вырăнта, завода ĕçлекенсем валли кану çурчĕ уçнă, унта халь 100 çын канать. Çав кану çурчĕ çулталăкĕпех ĕçлемелле. Рабочисемпе служащисен ачисем икĕ ача садĕнче, пионер лагерĕнче тата икĕ ача площадкинче канаççĕ. Ноябрь уйăхĕнче хĕллехи санатори уçăлать, унта 80 ача вырнаçмалла. Заводăн çĕнĕ поликлиники чирлĕ çынсене сыватма пуçланă. Август уйăхĕнче унта водолечебница тата рентген кабинечĕ уçăлать.

Столовăйсенче апатлантарас ĕçе лайăхлатма вăйлă тăрăшаççĕ. Ремесло училищи çумĕнче çĕнĕ столовăй уçнă, диэтически столовăя аслăлатаççĕ.

Заводра рабочисене йăла тĕлĕшĕнчен пулăшмашкăн комитет организациленĕ. (ТАСС).

Совет Союзĕн Эфиопири Посланникĕ Козлов юлташ хăйĕн верительнăй грамотисене пани

АДДИС-АБЕБА, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Эфиопири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посланникĕ В. С. Козлов юлташ паян Эфиопи императорне 1-мĕш Хайле Селассиене хăйĕн верительнăй грамотисене панă. Козлов юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: «Совет Союзĕн халăхĕсем Эфиопи халăхĕсене питĕ хисеплеççĕ, вĕсемпе туслăн пурăнма тăрăшаççĕ. Эфиопипе туслăн çыхăнса тăрасси тата çав туслăха çирĕплетсе пырасси Совет правительствин чун пуртăмĕ пулса тăрать».

Эфиопи императорĕ Хайле Селасси хăйĕн сăмахĕнче çав туслăхшăн тав тунă. Вăл çапла каланă: «халăхи хăрушă тата пулас пурнăçшăн питĕ паха вăхăтра Совет Союзĕн халăхĕсем тата унăн чапа тухнă армийĕсем халиччен нихăçан пулман пысăк ĕç тунăшăн Эфиопи халăхĕ калама çук хытă хĕпĕртет».

Император тата çапла шанса каланă: çав туслăха пĕр-пĕрне чунтан-чĕререн хисеплени Эфиопипе Совет Союзне пĕр-пĕрине питĕ ăнăçлăн çыхăнса ĕçлеме май парĕ, тенĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 6-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Ла-Э-Дю-Пюи чугун çул вокзалне йышăннă, халĕ вĕсем, тăшмантан фут хыççăн фут çĕр туртса илсе, кăнтăралла куçса пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем хăйсен Карпикери позицийĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. Тăшман çаплах атакăлать.

Çапăçусен районĕнче, унтан кăнтăртарахра тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн авиаци ĕнер кунĕпех тăшман истребителĕсен пысăк соединенийĕсемпе хаяр çапăçнă. Пирĕн истребительсемпе истребитель-бомбардировщиксен чылай пысăк йышĕ фронт талккăшĕпех тип çĕр çинчи чаçсене тăшманпа çапăçма вăйлă пулăшса тăнă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 6-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен Ла-Э-Дю-Пюирен хĕвелтухăçнелле наступлени туса пыракан çарĕсем Мон-Кастр вăрман хĕррине çитнĕ, вĕсем халĕ хула сывăхĕнчи паха çӳллĕ вырăнăн нимĕçсем тытса тăракан пайне туртса илме тăрăшаççĕ. Пирĕн çарсем, тăшман контратакăсем тунине пăхмасăр, Карантан хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнелле каякан çул тăрăх наступлени туса пыраççĕ.

Кан хули районĕнче Карпикери аэродрома тытса илессишĕн хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кунти çапăçусенче танксемпе пехота чаçĕсем кĕрешеççĕ. Тăшманăн темиçе танкне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн самолетсен пысăк соединенийĕсем чугун çулсемпе шоссе çулĕсем çине бомбăсем пĕр чарăнмасăр тăкса тăнă.

Пирĕн самолетсем Карантан хулинчен кăнтăр--хĕвеланăçнерехре пĕр çĕре пухăнса тăнă тăшман çарĕсем çине тата Лессэ сывăхĕнчи çулсем çине бомбăсем пăрахнă».

ГИТЛЕРАН ХĔВЕЛАНАÇĔНЧИ ÇАРĔСЕН ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИНЕ РУНДШТЕДТА ВЫРĂНТАН КĂЛАРНА

ЖЕНЕВА, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Трансоцеан ятлă гитлерла агентство çапла пĕлтернĕ: Гитлер приказĕ тăрăх, Германин Хĕвеланăçĕнчи çарĕсен главнокомандующине фон Рундштедт генерал-фельдмаршала вырăнтан кăларнă, ун вырăнне фон Клюге генерал-фельдмаршала лартнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Итали фронтĕнче пур секторсенче те тенĕ пекех тăшман хытă хирĕç тăнă. Анчах та союзниксен çарĕсем малалла куçнă, вĕсем, сăмахран, Сиена хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри секторта малалла куçнă. Американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче çапăçусем Росиньяно Мариттимо сывăхĕнче тата Монтекатани районĕнче пыраççĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн малти чаçĕсем Ареццо хулинчен Флоренци хулине каякан çула татасшăн çапăçаççĕ. Инди чаçĕсем Тибр шывĕн тури тăрăхĕнчи айлăмра Умбертиде хули патне çитсе тухнă.

Ĕнер союзниксен авиацийĕ кăнтăр Францие тапăннă. Тулонра тăшманăн подводнăй лодкисем тăракан вырăнсем çине тата порти сооруженисем çине, çавăн пекех тата Монпельери тата Безьери чугун çул станцийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тăшманăн Çурçĕр Италири тылри çулйĕрĕсене тата унăн снабжени базисене тапăннă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри стратегиллĕ сывлăш çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен соединенийĕсем июлĕн 5-мĕшĕнче ирхине, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Голландири тата Бельгири аэродромĕсене тата нимĕçсен Па-де-Кале районĕнчи самолет-снарядсен базисемпе ытти объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Çурçĕр-хĕвеланăç Германири объекчĕсене, Францири аэродромĕсене тата Па-де-Калери çар сооруженийĕсене тапăннă, çав шута самолет-снарядсен вĕçсе хăпармалли станцийĕсем те кĕреççĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: июлĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Акăлчан бомбардировщикĕсен пысăк вăйĕсем нимĕçсен Çурçĕр Францири самолет-снарядсем вĕçсе хăпармалли станцийĕсене тата ытти вăрçă объекчĕсене атакăланă. «Москито» йышши бомбардировщиксем Гельзенкирхен хули сывăхĕнчи Бюрери синтетически горючи заводне, çавăн пекех тата Рурти ытти объектсене те атакăланă.

Копенгаген хулинчи лару-тăру

ГЕТЕБОРГ, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Ню тид» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Данири лару-тăру çаплах лăпланмасть-ха. Копенгаген хыççăн тата 24 хулара забастовка пуçланса кайнă.

Швецири радио çапла пĕлтерет: забастовка тăвакан датчансем «Шальбург корпусĕн» (Данири фашистсем) членĕсене Копенгагенран кăларса кайма ыйтнă. Нимĕçсен çакăнпа ирĕксĕрех килĕшмелле пулнă. Вара çакăн хыççăн ирĕклĕ датчансен союзĕн совечĕ рабочисемпе служащисене июлĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа ĕçе тухма чĕннĕ.

ДЕ ГОЛЛЬ ВАШИНГТОНА ПЫНА

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генерал Вашингтона пынă.

Лăпкă çын

1.

— Сержант Няма çинчен çакна калас пулать, — терĕ лейтенант Васильев,—вăл кунĕ çын, лăпкă кăмăллă çын. Килте чухне вăл чăх е автан пусас пулсан та кӳршĕсене чĕнеттĕм тет... Эккей, пулать этем!

Лейтенант шинель кĕсйинчен хаçат татăкĕ кăларса пирус чĕркерĕ те, ăна чĕртсе ярсан:

— Анчах та эпĕ ун çине шанатăп, вăрçăра тăшмана маххă памасть вăл,—тесе вĕçлерĕ хăйĕн шухăшне.

Ку сержанта эпĕ те лайăх пĕлетĕп. Чăваш вăл. Чăннипех те кунĕ çын иккен. Чăвашсем пурте кунĕ темĕпĕр. Апла калани йăнăш пулĕччĕ. Чăвашсем хушшинче те тĕрлĕ çынсем пур.

Поликарп Няма, хăйсен ялĕнчи çынсем пек каласан: Нямă Поликарпĕ — Тутар республикинче çуралса ӳснĕ çын. Вăл пĕр вăтăр çулта пулĕ. Лутра, анчах тапчам, вăйпитти арçын вăл. Алли-ури çирĕп, уйхир ĕçĕнче пиçсе хытнă. Килте арăмĕ, ачисем пур, тет. Сăнĕ, тем каласан та, чăвашăнах ĕнтĕ: пит-куçĕ çаврăкарах (каччă чухне вăл илемлĕ пулнă пулас); унăн лапчăкрах сăмси тăрри хĕвелпе, çилпе çуралса вистеннĕ те çĕнĕ ӳт тухнă; куçĕсем хĕсĕкрех, анчах çивĕч. Унăн куçĕсем таçтине те кураççĕ. Няма юлташ тутарла, вырăсла лайăх калаçать.

Каллех калатăп: инçетрине курать вăл хăйĕн хĕсĕкрех куçĕсемпе, унăн куçĕсем питĕ витĕр кураççĕ, вăл çав тери таса куракан куçĕсене таçта çеçенхирте çивĕчлетнĕ тейĕн.

— Вон фриц! — терĕ пĕррехинче симĕс хăва çине кăтартса. Эпĕ пăхрăм-пăхрăм, аран-аран куртăм нимĕçе. Ула, курăк пек симĕс плащпа пĕркеннĕ фашист сыран хĕрринче, çӳçе хăвисем хушшинче, пирĕн еннелле бинокльпе пăхса тăрать.

Тăшманпа пирĕн хушăмăрта тарăн Волхов васкаса юхать. Унăн таса шывĕ: [illegible]

— Шыва пăхăр-ха, капитан юлташ, — тет сержант халĕ çеç пĕр пĕчĕк пулă сиксе илнĕ тĕле кăтартса, — фриц мĕлки хăйĕнчен виçĕ хут вăрăм. Тĕкĕр витĕр пăхнă пек...

Çӳллĕ симĕс куракăсене хуллен сирсе пăхатăп та нимĕç мĕлкине курах каятăп: майĕпен хумханса юхакан шывра унăн мĕлки çĕлен пек авкаланать.

— Ну халĕ эпĕ прицел лартам, — систерет мана Няма,—эсир хăть нимĕç çине пăхăр, хăть мĕлки çине...

Сержант хăйĕн пулемечĕ патне майлăн чăсăлса выртрĕ. Часах вара: тăр-р-р-т! турĕ пулемет кĕпçинчен кĕске очередь. Курпун нимĕç, тусан вĕçтерсе, пăлтăр-палтăр йăванса анчĕ, шыв хĕрринех çитсе выртрĕ. Пĕр кĕтӳ шапа нимĕçрен хăраса шыва сикрĕ.

— Маттур перетĕн! — ырларăм эпĕ.

— 21-мĕш фриц ку, — пĕлтерчĕ мана пулеметчик хăйĕн ĕçĕ çинчен.

Çак ĕç пĕлтĕр, 1943 çулхине, август уйăхĕнче пулса иртрĕ. Унтанпа Няма юлташпа эпĕ темиçе хут та тĕл пултăм. Кирек ăçта та вăл хăйне типтерлĕ тытать: стройра-и, кану вăхăтĕнче-и, коммунистсен пухăвĕнче-и,—пурпĕрех. Мунча кĕме кайсан та, марша тухсан та унăн тумĕ, унăн сăнĕ — совет воинĕн сăн-пуçĕ, кăмăлĕ вара хĕр кăмăлĕ пек.

2.

Хĕлле пирĕн фронтра та пысăк çапăçу пуçланса кайрĕ. Оборонăра тăрса тунсăхланă хĕрлĕ салтаксем, тăшмана аркатса тăкас тесе, малалла ыткăнчĕç.

Шăпах наступлени пуçланнă кун тарăн траншейăра эпĕ Няма юлташа тĕл пултăм. Нимех те калаçаймарăмăр: пĕр-пĕри мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлтĕмĕр те уйăрăлтăмăр.

— Ну, Н. хулинче тĕл пулăпăр! — терĕм эпĕ сывпуллашса.

— Н. хулинче! — килĕшрĕ сержант.

Анчах Няма юлташа çав хулара эпĕ тĕл пулаймарăм. Мĕншĕнне пĕлес тетĕн пул- [illegible]

3

...Х. — пысăк ял мар. Анчах унта кетмер çуртсем пур. Пысăк больница, шкул, клуб... «Мысовая» высота çинчен аран-аран шăммисене çĕклесе тарма ĕлкĕрнĕ нимĕçсем, майор К. батальонĕ хĕссе пынипе, Х. ялĕнчи чул çуртсене кĕрсе ларнă. Каллех хирĕç тăма тытăннă вĕсем. Пĕр чул çуртран тăшман пулеметчикĕ чарăна пĕлмесĕр персе тăнă. Çак пулеметчика пĕтермесен, нихăш енчен те яла пырса кĕме çук.

Пирĕн салтаксем юр ăшĕнче выртаççĕ. Вĕсен хастар ретĕнче — паттăр пулеметчик Няма. Тимлĕн сăнаса пăхать вăл тăшманăн пулеметчикĕ кĕрсе ларнă çурт еннелле. Çав çуртăн темиçе амбразура. Кашни амбразурăран пульă сирпĕнсе тăрать. Анчах пĕр харăс сирпĕнмест: хăш енчен пыма тытăнатăн — çав енчен перет нимĕç пулеметчикĕ.

— Ку çуртра ик-виç пулемет пулас. — Сасăпа каласа шухăшлать сержант. Унтан вăл каллех хăйне-хăй: — фрицсене пĕтерсен, пулеметсем хăйсем тĕллĕн перейĕмĕç...

Çакăн хыççăн пирĕн пулеметчик хăйĕн «Максимне» лайăхрах вырнаçтарса лартать те:

— Ну, Зеленов юлташ, фашистсене ăшалар! — тет çирĕп сасăпа.

— Елки-палки!—тесе сурать те Зеленов, хăйĕн тусĕпе килĕшсе, тăшман çине пульă хыççăн пульă вĕçтерме тытăнать.

Совет пульлисем шăхăра-шăхăра пĕрхĕнеççĕ, тĕттĕм амбразурăна вĕçсе кĕреççĕ. Ак, чул çуртра çĕлен-калтасем çухăрашма, йынăшма пуçларĕç. Тăшман пулемечĕ çапах та чарăнмарĕ: хытăрах та хытăрах пеме тытăнчĕ вăл. Нямăна тепĕр пулеметчик красноармеец Стремеухов пулăшрĕ. Сулахай флангра вĕçĕмсĕр такăртаттарса юрлаттарчĕ вăл хăйĕн «Максим» тусне. Хыçран, вĕтĕ-вĕтĕ çирĕксем хушшинчен, «Колдун» кĕрĕслеттерме пуçларĕ. Паттăрсем часах ăнланчĕç. «Колдуна» пирĕн артиллеристсем йĕркеленĕ те тăшман еннелле çавăрса лартнă. Чăнахах та маттур переççĕ иккен совет артиллерисчĕсем!

Тарăн юр çийĕн, чупнă çĕрте чупса, утнă çĕрте утса, упаленсе кайрĕ пулеметчик Няма. Пĕлтĕрсем çине лартнă пуле- [illegible] не çĕклеймеççĕ.

— Хамăр пулемет! — кăшкăрчĕ совет стрелокĕ савăнса.

— Максим! Хамăрăн!..—хутшăнчĕ иккĕмĕшĕ.

— Сассинченех паллă...—çирĕплетрĕ виççĕмĕшĕ.

Чул çурта кĕрсе вырнаçнă сержант хăйĕн пулеметне çирĕплетсе лартнă. Унăн халĕ нимĕç пулемечĕ те пур. Анчах чи лайăххи «Максим».

Вилĕ нимĕçсен ирсĕр кĕлеткисене тарăхса çитнĕ чăваш чӳрече витĕр урамалла ывăтать.

— Çав кирлĕ вĕсене! — катаран кăшкăрать Няма тусĕ пулеметчик Стремеухов. Хăй, лачкам шыва ӳкнĕскер, монастырь еннелле тĕллесе перет. Унта нимĕçсем кĕпĕрленсе пыраççĕ мĕн. Няма та вĕсене ăшалама тытăнать. Совет пульлисем пырса тивнипе нимĕç хыççăн нимĕç тăкăнать. Кĕлте пăрахса тухнă пек выртаççĕ вĕсем. Кашни фашист интереснăрах выртма тăрăшнă, тейĕн... Çав çаткăнсем виçĕ пин километр чупса килнĕ. Анчах нихăшĕ те виçĕ метртан ытла «вăрçса» илеймен Совет çĕрне.

Икĕ нимĕç чул çурт еннелле гранатăсем йăтса чупаççĕ. Çав вăхăтрах иккĕшĕ те кутăн-пуçăн çаврăнса ӳкеççĕ. Мăнтăр та кӳпшек нимĕç, мăйне чулхасемпе çыхса тултарнăскер, хырăмне каçăртса выртать. Хытканни чăсланка кĕлеткепе юр ăшне шалса пек пырса тăрăнать.

«Маншăн икĕ фриц мар, икĕ рота та нимех те мар» — шухăшлать харсăр пулеметчик. Ку пӳлĕмре вăл хăй хуçа. Анчах юнашар пӳлĕмре, ытти кӳршĕ çуртсенче, монастырьте тăшман пуçпулса тăрать-ха. Вĕсене çапса аркатмалла, тĕп тумалла.

— Русс, ставайся! — илтĕнет кӳршĕ пӳлĕмрен нимĕç сасси.

— Сана ак сдавайся парам эпĕ...—ответлет сержант пулеметне стена çинелле çавăрса лартса.

— Русс... — илтĕнет каллех сасă.

— Эпĕ—вырăс шăлнĕ çеç, эпĕ—чăваш.—тет те пулеметчик пĕр очередь парать нимĕç сасси илтĕннĕ тĕле.

— Русс кирлĕ пулсан, вăл килĕ-ха. Вăл килсен эсĕ, фриц, шăммуна та çĕк- [illegible] пĕр стени ала пек пулчĕ. Кӳршĕ пӳлĕмре фашист кĕрĕслетсе ӳкрĕ.

— Майн гот-т-т...—кăшкăрчĕ вăл юлашки сассипе.

4.

...Мĕн тĕттĕм пуличченех ял патне пĕр нимĕç те пырайман. Çавăн пекех тата ялтан та тухайман вĕсем. Фашистсене паттăр пулеметчик кастарса тăнă.

Инçетре-инçетре хĕллехи хĕвел анса ларнă хыççăн, Волхов вăрманĕ сивĕ тĕтри ăшне путсан, пирĕн боецсем утса мар, упаленсе, хырăмпа шуса кĕчĕç, сиксе тăчĕç те фашистсем çине арăслансем пек пырса тапăнчĕç. Сержант Няма кĕтсе илнĕ вĕсене.

Çак хаяр тытăçура пулеметчик аманнă. Тăшман пульли кăкăртан кĕрсе хулпуççирен тухнă.

Мĕнле тӳснĕ-ши вăл çавтери пысăк сурана?..

* * *

...Волхов çыранĕсенчен чылаях малалла кайсан, сивĕ хĕл иртсе çур килсен, май уйăхĕнче пĕр хĕвеллĕ кун, Васильев лейтенанта эпĕ тата тепĕр хут тĕл пултăм. Тӳрех «лăпкă çын» çинчен ыйтма тытăнтăм эпĕ.

— Халĕ вăл госпитальре, — пĕлтерчĕ вăл мана. Унтан тĕлĕне-тĕлĕне каларĕ:—вăт лăпкă те эсĕ ăна. Калама çук хаяр çапăçрĕ чăваш ывăлĕ, Поликарп Няма. Аманнă пулин те хамăр подразделени яла пырса кĕриччене вăрçăран тухмарĕ вăл. Çынăн паттăрлăхĕ сăнран курăнмасть... — терĕ юлашкинчен лейтенант Васильев.

Эпĕ лейтенант сăмахĕсемпе килĕшрĕм. Чăваш сержанчĕ çавăн пек пысăк хаярлăхпа çапăçнăшăн эпĕ пĕтĕм чун-чĕререн хĕпĕртерĕм.

Чăнах та, мĕн тери лайăх хамăр çынсен паттăр ĕçĕ çинчен илтме. Ывăлĕ ырă ĕç тусан, паттăра тухсан — унăн ашшĕ-амăшĕ хĕпĕртет. Пурте çавах: савнă каччăшăн савнă хĕрĕ хĕпĕртет, упăшкишĕн арăмĕ хĕпĕртет, ăшшĕшĕн — ачи-пăчи хĕпĕртет, кашни паттăршăн халăх хĕпĕртет.

Сĕнтерӳшĕн хĕпĕртет пирĕн халăх! Мĕншĕн тесен сĕнтерӳрен пысăкраххи, пахараххи, савăкраххи тĕнчере урăх çук. Çавăнпа [illegible]

Капитан В. ДОЛГОВ.
Çапăçури çар.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Вăрнарти зооветтехникум 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум зоотехниксемпе веттехниксем вĕрентсе хатĕрлет.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Заявленисене августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: а) хăçан, ăçта çуралнине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне, копине мар); б) ăçта, миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне); в) сывлăх çинчен калакан справка; г) çар служби тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна военнооблзаннăйсен ямалла); д) виçĕ фотокарточка.

Вĕренме кĕрес текенсен çак предметсемпе испытани тытмалла: вырăс чĕлхипе тата литературипе, математикăпа, конституципе.

Вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен отлично вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене те испытанисĕрех илеççĕ.

Вĕренме кĕмелли испытанисем августăн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ.

Техникумăн столовăй, общежити, библиотека, мунча, прачечнăй пур.

Адрес: п/о. Вурнары, Зооветтехникум.

Главнефтеснабăн чăваш управленине строительствăра ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: ĕç йĕркелекен, бухгалтер, главнăй механик тата тĕрлĕ рабочисем.

Ĕçлеме илнисене хваттер тата пахчасем парассĕ. Ларек пур. Столовăй [illegible] Адрес: г. Чебоксары, Дом печати, 4-мĕш этаж, комната 14 №. [illegible] Главнăй управлени.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарăн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа хуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00245. Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 ф. б. 60Х42 ½ л. Тираж 14.400 экз.